Çыру йĕрĕпе

Ялта шывсăр пурнăç çук

Çыруран:

«Тинех çитрĕç пурте кĕтнĕ çу кунĕсем. Пирĕн шутпа савăнса пурăнмалла çеç. Анчах та Шаптак ялĕнчи Çĕнĕ урам çыннисемшĕн (Муркаш ял тăрăхĕ) савăнăç вырăнне нушаллă кунсем пуçланчĕç. Мĕншĕн-ха?

Çак пурнăç çăл куçне пирĕн урама çитерме пăрахрĕç. Малтанах каçсерен шыв паратчĕç, халĕ вара икĕ эрне патнелле пачах та шыв пама пăрахрĕç. Мĕнле пурăнмалла-ха Çĕнĕ урам çыннисен, çав шутра пĕчĕк ачасем те, ватăсем те сахал мар.

Пирĕн пĕлес килет, мĕн шутлаççĕ-ши В.З. Ермолаев депутат, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин халăх нуши пирки? Вĕсемшĕн сасăланă халăх çинчен шутламаççĕ пулас вĕсем, малалла та кун пек пулсан, халăх шухăшĕ вĕсем çинчен улшăнĕ. Пирĕн урама та шыв çитессе шанас килет, унсăрăн пирĕн пурнăç çук".

Çĕнĕ урамри ял çыннисем.
12.07.06.

Çапларах çыру килчĕ çак кунсенче райхаçат редакцине. Ырăран çырман ĕнтĕ ăна, чунĕ тăвăлса çитнипе. Çак çыру айне Çурлатрисем те, Муркашсем те, пилĕк çул ытла шыв курман Шетмĕпуçсем тата ытти шывсăр асапланакан ял çыннисем çирĕппĕнех алă пусса хунă пулĕччĕç. "Шыв – пурнăç çăл куçĕ" тетпĕр, ял халăхĕ вара çу кунĕнче шывсăр асапланать... Шăрăх çанталăкра шыв пĕлтерĕшĕ уйрăмах пысăк – пире вара шыв шăнкăртатса юхни тĕлĕкре çеç тĕлленет. «Шыв пуласлăхĕ пур-ши?» – çак ыйтупа кайрăм эпĕ район администрацине.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçи Владимир Германович Никитин пуçне те шыв ыйтăвĕ ыраттарать иккен. Ку енĕпе ĕçлеме те тытăннă, анчах укçа çитсе пыманни такăнтарать. 2003 çулта "Муркаш районне 2005-2008 çулсенче ĕçмелли шывпа тивĕçтересси çинчен ятарлă программа" хатĕрленĕ, ăна халĕ çирĕплетнĕ те ĕнтĕ. Программа тĕллевĕсем питех те пархатарлă: район çыннисене ĕçмелли шывпа тивĕçтересси (паянхи куна: талăкра 5,69 пин кубла метр шыв кирлĕ пулсан, эпир 3,41 пин кубла метрĕпе çеç усă куратпăр!), çакăн урлă вĕсен сывлăхне çирĕплетесси, шыв парса тăракан источниксене юсассине, упрассине, тĕрĕс усă курассине йĕркелесси тата ыт. те. Ума лартнă тĕллевсене пурнăçлама, ятарлă мероприятисем ирттерме вара миллионĕ-миллионĕпе укçа кирлĕ (200 млн. яхăн!), республика бюджетĕнчен пур района валли, шутласа хунă тăрăх, 241 млн. тенке яхăн кăна уйăрса параççĕ. Ку сумма çителĕксĕрри куç кĕретех ĕнтĕ. Хаксем çулсеренех ӳссе пынине те шута илмелле. Темле пулсан та, район администрацийĕ шыв проблемине татса парас тĕллевпе ĕçлеме тытăннă темелле. Муркашри, Мăн Çĕнтĕрти, Вăрманкас Хачăкри шыв парса тăракан системăсене реконструкцилесе тивĕçлĕ виçене çитерессипе ĕçлекен проектсене хатĕрленĕ ĕнтĕ. Вĕсем экспертиза витĕр те тухнă, çитес çулсенче пурнăçа кĕмелле. Ытти проектсене хатĕрлесе çитерме, экспертизăна тăратма планланă. Çине-çинех калани лайăх мар та – каллех укçа çитсе пыманни ура хурать. Çапах та специалистсем халăха шывпа тивĕçтерес енĕпе çине тăрса ĕçлеççĕ. Паллах, вĕсен ĕçĕнче вăйсăр вырăнсем те çук мар-тăр – хальхи вăхăтра самани те хăй пăтратать (укçа енчен те, оборудовани енчен те).

Шаптакри Çĕнĕ урамри ял çыннисен çырăвне эпĕ Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхне Николай Иванович Никитина та кăтартрăм. Хăйне шанса панă тăрăхра шыв çуккине пĕлет пуçлăх. "Шыв проблеми – пирĕн тĕп проблемăсенчен пĕри",- пăшăрханса калаçрĕ Николай Иванович.

Паянхи куна Муркаш ял тăрăхне шывпа тивĕçтерессипе Е. Андреев ячĕллĕ ял хуçалăх предприятийĕпе Муркашри коммуналлă хуçалăх ĕçлеççĕ. Е. Андреев ячĕллĕ хуçалăх аллинче шыв уçламалли скважинăпа башньăсем, коммуналлă хуçалăх вара 7 скважинăпа 5 башня тытса тăрать. Ку скважинăсемпе башньăсене 15-20 çул каялла ĕçе кĕртнĕ. Коммуналлă хуçалăх нумай хваттерлĕ çуртсене тата Çĕньял урамĕсене шывпа тивĕçтерет. Е. Андреев ячĕллĕ хуçалăх вара Муркаш ялĕнчи Колхозная, Çĕнĕ колхоз, Красноармейски, Фронтовая урамĕсенче, Шаптак ялĕнче тата Шорка, Çюрлатринчи Молодежная урамра пурăнакансем патне шыв илсе çитерессишĕн яваплă.

Çавăнпа та эрне кун, çурлан 14-мĕшĕнче, Шаптак çыннисен çырăвне алра тытса ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе Н. И. Никитинпа пĕрле Е. Андреев ячĕллĕ хуçалăх ертӳçи Н.В. Рудаков патне васкарăмăр. Чĕлхе çинче – паянхи кун пурне те хумхантаракан, пуç хыçтаракан ыйту: "Ял çыннин таса шыв пулать-и?" Паллах, ку ыйтăва пĕр кунта татса пама çук, Рудаков вара пире Шаптак ялĕ, Колхозная, Çĕнĕ колхоз урамĕсем патне шыв илсе çитерекен насуса улăштарса пама шантарчĕ. "Паянах хулана кайса илсе килетĕп, паянах ларттаратăп",- калаçрĕ ертӳçĕ. "Паян" тени эрне кунран тунти куна тăсăлчĕ пулин те, тунти кун Н.В. Рудаков хăй сăмахне тепĕр хут çирĕплетрĕ, насуса илсе килнине, çитес вăхăтрах лартассине пĕлтерчĕ. Асаннелле хаш сывласа ярас килет: "Çапла пултăрччĕ!"

Шыв çуккинче нумайăшĕ пуçлăхсене ӳпкелеççĕ: ĕçлемеççĕ, халăх нушине пĕлмеççĕ, ун çинчен шухăшламаççĕ, ахăр. "Ял çыннисен колхоз умĕнчи шыв парăмĕ вара 200 пине яхăн,- пĕлтерчĕ Н.В. Рудаков – Колхозниксенчен шывпа усă курнă суммăна ĕç укçинченех тытса юлатпăр. Колхозра ĕçлемен "интеллигенци" çыннисенчен хăшĕсем вара шыв укçине тӳлеме "манаççĕ" пулас. Н.В. Ядыков – 4705 тенкĕ, В.А. Углев – 2377 тенкĕ, С.Д. Андреева – 2258 тенкĕ, Н.А. Тимофеев 2226 тенкĕ таранах хуçалăх бухгалтерине парăма çитерсе паман. Шыв насусĕсене улăштарни те, çутти те хакла ларать, колхоз кассине укçа кирлĕ чухлĕ пыманран хуçалăхăн скважинăсемпе башньăсене юсаса тăма вăй çитмест".

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин вырăнти ялсене çитсе курма сĕнсен эпĕ хирĕçлемерĕм: хам куçпа курни аванрах ĕнтĕ.

Малиновка ялĕнче шăрăх хуçаланни урамрах сисĕнет.

Урам варринчи пĕвесенчен пĕри тĕппипех типсе ларнă. Çуркаланса пĕтнĕ, тахçан йăлтăр пĕве пулнă вырăн тăрăх хурсем утса çӳреççĕ. Мăнаçлă кайăксем шыв çуккинчен тĕлĕнсе шурă çуначĕсемпе шарт! çапнăнах туйăнчĕ мана. Çынсен пахчине кĕрсе пăхсан вара тĕлĕнсе алăсене шарт çапма пирĕн черет çитрĕ пулас. Халăхăн ĕçме, çăвăнма шыв çук чухне хăшĕ-пĕри (калас пулать, кун пеккисем сахал мар) пахчине, улма йывăççисене шăварма ăс çитереççĕ. Кашни хуçалăхра тенĕ пекех тем вăрăмăш шлангсем, колхоз башнинчен шыв юхтарма меллĕскерсем ĕнтĕ. Ял çыннине ăнланма та пулать: типĕ çанталăкра пахча çимĕçĕ те хĕн курать. Хресченшĕн вара кашни çĕр улми тĕмми, кашни йăранĕ тем пекех хаклă: эпир вĕсене хамăр тарпа çитĕнтерсе ӳстеретпĕр мар-и-ха? Хальхи вăхăтра нумайăшĕн пĕртенпĕр шанчăкĕ те пахчара кăна: ял халăхĕ хăй аллипе ӳстернĕ "пурлăха" сутса укçа тума хăтланать. Çапах та шывпа тĕрĕс те тирпейлĕ усă курмалла. Çынсен ĕçме, пит çума шыв çук чухне башньăран виçесĕр юхтартемăсене пĕтĕмпех тĕрĕслесе тухмалла". Капиталлă строительствăпа ЖКХ управленийĕн начальникĕн çумĕ, "УК ЖКХ" МУП директорĕ Н.В. Любимов шухăшне те пĕлес терĕм эпĕ. "Паянхи куна Муркаш ял тăрăхне шыв парса тăракан системăсене реконструкцилес тесе проект туса хатĕрленĕ, вăл экспертиза витĕр те тухнă, ăна республика программине кĕртме тăратнă",- пĕлтерчĕ вăл.

Шывсăр пурăнма çукки куç кĕретех ĕнтĕ. Çавăнпа та манăн Муркашри коммуналлă хуçалăх ертӳçин Н.А. Шишкинăн сăмахĕсем пурнăçа кĕрессе шанас килет: "Шыв парса тăракан системăсене тĕпрен реконструкци тăвасшăн. Муркашра шыв хуларинчен кая ан пултăр!" Муркашра кăна мар, халь шывсăр пурăнакан кашни ялта, кашни урамра, кашни килте. Хамăр тăрăшсан, пуçлăхсем халăх умĕнче панă сăмаха тытсан, çанă тавăрса ĕçлесен, ĕмĕтленни çитетех. Çапла пултăр та!

Й. СТЕПАНОВА.

Сăн ӳкерчĕксенче: пĕрисем шывсăр аптранă чухне теприсем..; пĕвери хурсем те типпе юлнă.

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

Операци

Йĕркене пăснă тĕслĕхсем ан пулччăр

2006 çулхи июлĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 20-мĕшĕччен республикăра "Çул çитмен çамрăк – çулла!" операци пычĕ. Çак операцине килĕшӳллĕн июлĕн 11-мĕшĕнче районти çул çитмен ачасемпе ĕçлекен комисси тата прокурор çумĕнчи ĕç ушкăнĕн членĕсем шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсемпе пĕрле профилактикăлла рейд ирттерчĕç. Вĕсем Мăн Çĕнтĕр, Ильинка тата Катькас ял тăрăхĕсен территорийĕсенче ăнăçсăр çемьесенче тата районти шалти ĕçсен пайĕнче ĕçлекен çул çитмен ачасемпе ĕçлекен инспекцире учетра тăракан ачасемпе тĕл пулса калаçрĕç.

Малтанах вĕсем Мăн Çĕнтĕр ял тăрăхне çитсе курчĕç. Рейда ку ял тăрăхĕн специалисчĕ З.П. Шуляева хутшăнчĕ, ăнăçсăр 6 çемьере пулса профилактикăлла калаçусем ирттерчĕç.

Ун хыççăн вĕсем Ильинка ял тăрăхĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене туса пыракан Г.Н. Силантьевапа пĕрле ку ял тăрăхне кĕрекен 6 ялта пулса курчĕç.

Уйрăмах пире Куçкин ялĕнче çуралса ӳснĕ Алевтина Александровна Кожанова пурнăçĕ тĕлĕнтерчĕ. Ку хĕрарăмăн 2 ывăл: 10 çулхи Николай тата 7 çулхи Артем. Анчах та амăшне вĕсен пуласлăхĕ пĕртте интереслентермест. Алевтина хăйĕн еркĕнĕпе Родион Барановпа пĕрле (вăл каланă тăрăх, ачасен ашшĕ имĕш) ялсем тăрăх эрех ĕçмелле тата çимелле ĕçлесе çӳрет. Эпир ку хĕрарăма Шерĕк ялĕнче Ивановсем патĕнче шыраса тупрăмăр. Эпир пынă чух Родион Баранов çӳлерех асăннă Ивановсем патĕнче ним пĕлми ӳсĕр çывăрать. Алевтина вара утă тиесе килнĕ хыççăн кил хушшинче кил хуçисемпе эрех ĕçсе ларатчĕ. Хăй ĕнтĕ калаçайми те пулнă, ӳсĕр.

Ку хĕрарăма ачасене воспитани парассипе хăйĕн тивĕçĕсене пурнăçласа пыманшăн административлă кодексăн 5.35 статйипе килĕшӳллĕ протокол çырнă. Кĕçех ăна çул çитмен ачасемпе ĕçлекен районти комиссинче пăхса тухĕç.

Çавăн пекех комисси членĕсем ачасен сывлăхне çирĕплетмелли "Ильинский" лагерьте пулчĕç. Паянхи куна илсен, çак канмалли учрежденинче 340 ача хăйĕн сывлăхне çирĕплетет. Кунта республикăри тĕрлĕ район ачисем. Ку учрежденийĕн пуçлăхĕпе И.П. Савельевпа тĕл пулса калаçнă хыççăн кунти лару-тăру йĕркеллĕ пулни палăрчĕ. Ачасем пурте кăмăллă, вĕсене кунта канма питĕ килĕшет.

Районта юлашки вăхăтра уйрăмах ачасем хушшинче сотовăй телефонсем вăрлани пăшăрхантарать. Кунта, паллах, ачасен тимсĕрлĕхĕ, ашшĕ-амăшĕн ответлăх çукки палăрать. Ку лагерьте те çак ыйтупа калаçу ирттернĕ.

Юлашкинчен вара рейда ирттерекенсем Катькас ял тăрăхĕнче пулчĕç. Кунти Кĕрекаç ялĕнчи Еремеевсен, Черепановсен çемйисенче, Катькасри Вазиковсен, Шомикри Ильмендеровсен çемйисенче пулчĕç. Профилактикăлла калаçусем ирттерчĕç.

Г. ГРИГОРЬЕВА.

Ял уявĕ

Чаплăн паллă турĕç

Июлĕн 8-мĕш кунĕ. Тӳлек çанталăк, хĕвел хăйĕн ăшшине хĕрхенмест. Кăнтăрла иртни икĕ сехет. Анаткасси ялĕ варринче, шыв хĕрринче, сцена тунă, çынсене ларма вырăнсем хатĕрленĕ. Кĕвĕ янăрать, чăваш юррисем шăранаççĕ. Унтан та кунтан ял çыннисем пухăнчĕç, чĕннĕ хăнасем нумайăшĕ килсе çитнĕ.

Акă, сцена çине ертсе пыракан ĕçпе вăрçă ветеранĕ Т.А. Калитов тухать. Вăл кĕске сăмах каласа ял уявне уçни çинчен пĕлтерет. Сăмах калама хуçалăхри ветерансен канашĕн ертӳçине К.К. Корнилова сĕнет. Вăл ял уявне мĕншĕн ирттерни çинчен калать тата унăн тĕп тĕлевĕсене палăртать. Çавăн пекех Анаткас ял историйĕ çинчен сăмах калать. Ял уявне пухăннисене тата хăнасене уяв ячĕпе саламлать, телей сунать. К.К. Корнилов каланине пурте тимлĕн итлеççĕ, алă çупса хисеплеççĕ, кун пек уяв Анаткассинче пĕрремĕш хут пулнине палăртаççĕ.

Сцена çине художество пултарулăх коллективĕ тухать, ăна баянпа К.И. Албутова ертсе пырать. Хор ял уявĕн юррисене юрлать.

Сцена çине район администрацийĕн представителĕсем Эльвира Иосифовна Симаковапа Фаина Федосеевна Григорьева тухаççĕ. Вĕсем ял уявне пухăннисене хĕрӳллĕн саламлаççĕ, пурнăçра çирĕп сывлăх, юрату, телей сунаççĕ. Ун хыççăн район администрацийĕн йышăнăвĕпе паллаштараççĕ, ĕç ветеранĕсене – нумай çул хушши хуçалăхра вăй хуракансене саламлă çырусемпе хаклă парнесем парса чыслаççĕ, уйрăмах ферма ĕçченĕсене тата механизаторсене.

Сцена çинче – чĕннĕ хăнасем. Вĕсен шутĕнче ĕçпе вăрçă ветеранĕ К.Е. Евтихеев, 2-мĕш ушкăнри инвалид, Чăваш АССР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ; Владислав Николаевич Иванов – «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ», музыкăпа драма театрĕн ертӳçи.

Сцена çинче Владислав Григорьевич Пастухов-Анаткас. Вăл Тăвай районĕнче пурăнать, Анаткас çынни, Раççейри писательсен Союзĕн членĕ.

К.Е. Евтихеев, ял историне çыракан, пухăннисене саламлать, телей сунать. В.Н. Иванов та тăван ял çыннисене, хăнасене саламлать, ырлăх-сывлăх сунать.

В.Г. Пастухов-Анаткас та пухăннисене саламлать, уява чĕннисем кăмăллă пулнине палăртать. Çавăн пекех вăл хăй çырса кăларнă "Чăнлăхпа тĕрĕслĕхшĕн" кĕнекин 1-мĕш томне хуçалăхра ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă ветерансене парнелет.

Сцена çине умлăн-хыçлăн юрлакансем тухсах тăраççĕ.

Çамрăк артистсем (шкул ачисем) юрларĕç тата ташăсем ташласа пачĕç.

Ĕç ветеранĕсенчен Марина Федоровна Иванова (85 çул) тата Лидия Архиповна Петрова ĕлĕкхи юрăсене юрласа пачĕç.

Ял уявĕ нумая тăсăлчĕ, çамрăксем спорт вăйăйисенче ăмăртрĕç, волейболла вылярĕç. Пухăннисем ял уявне ирттернипе кăмăллă пулчĕç. Ун пек уява малалла та ирттерсе пыма сĕнӳ пачĕç.

Юлашкинчен çакна палăртмалла: ял уявне ирттерме район администрацине пулăшнăшăн пысăк тав.

Тав сăмахне культура ĕçĕнче ĕçлекенсене Регина Григорьевăпа Галина Павловăна та калас килет, вĕсем те ял уявне ирттерме пулăшрĕç.

Т. КАЛИТОВ.